2023-2024-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
6 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 120 минут

Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумайййи 50 балл пухма пулать

1. Нумай пăнчă вырăнне панă сăмахсене тĕрĕс вырнаçтарса лартăр: *çынра, шывра, пысăк, пĕччен.* Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.

а.Тĕрĕслĕх вутра та çунмасть, … та путмасть.

ă.Пĕчĕк чăнлăх … суяна çĕнтерет.

б.Хăвăнта чăнлăх пулмасан … ан шыра.

в. …– ыйхă çапма, эртелпе вăрман касма аван.

2. Йăнăшсене тӳрлетĕр: *Ача чĕльхи çинче йалан чăнлăх. Кашны ĕçĕн хăĕн кĕви.* Пурĕ – 5 балл.

3. *Хӳри – тукмак, шăлĕ – шак-шак. Урлă ура – утаман. Пĕр çăмхана пин йĕп чикнĕ.* Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупăр та вырăсла куçарăр. Пурĕ – 6 балл.

4. *Тылă, кин, аппа, лаша, пичче, арман* сăмахсене камăнлăх форминче 1 хисепре, 1 сăпатра çырăр. Çак сăмахсем К.Ивановăн мĕн ятлă произведенийĕнче тĕл пулаççĕ? Тĕрĕс çырнăшăн  - 6 балл, произведени ятне пĕлнĕшĕн - 1 балл. Пĕтĕмпе – 7 балл.

5. Предложенисен чиккисене тупăр та чарăну палли лартса çырса илĕр. Текстра япала ячĕнчен пулнă иккĕмĕшле сăмаха тупăр, аффиксне палăртăр.

*«Анчах ку çуна тинех ярăнма юрăхлă пулас çук ĕнтĕ ăна эпир лаçça кĕртсе хурăпăр вăл пирĕн ваттисене турттарса леçмелли çунашка пулĕ аннепе эсĕ ватăлсан та сире çак çунашка çине лартса хам килсе пăрахăп». ( Г.Волков çырнинчен).* Тĕрĕс çырнăшăн – 3 балл, сăмахне  тупнăшăн – 2 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

6. *«Пире кукăль памасан*
*Кăмакин ани йăтăнтăр!*
*Пире пăрça памасан*
*Миххине шăши шăтартăр!...»*
Çак йĕркесене ачасем чăвашсен мĕнле йăла уявĕнче юрлаççĕ? Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

7. 6-мĕш ĕçри сăвă йĕркисенче сас паллипе сасăсен шучĕ тӳр килмен сăмахсене тупăр. Тулли те тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.

8. «Слива вăрри» калаври Ваçкă Толикран миçе çул çамрăкрах? Калав авторĕ кам? Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.

9. Çуллахи уйăх ячĕсене çырăр. Тĕрĕс хуравшăн – 3 балл.

10. Эсир чăвашла вăйăсен ячĕсене пĕлетĕр-и? Пĕр-пĕр вăйă йĕркине туллин ăнлантарса çырса парăр.   Тулли хуравшăн – 7 балл.